С(Ч96)
П23
Ч92

Вениамин
ПЕХИЛЬ

# Шăнкрав курăкĕ

## ШĂНКРАВ КУРĂКĔ

Эс чĕтретĕн-им,
Эс йĕретĕн-им,—
Ма салхуллă сан йăл куллу?..
Шăнкрав курăкĕ
Парне пултăр-и,
Шăнкрав курăкĕ — уйрăлу.

Утас çук урăх,
Чупас çук урăх
Сывлăм сыраннă сукмакпа.
Ирхи тĕлĕкĕм,
Çурхи ĕмĕтĕм,
Урăх тĕл пулас çук санпа.

Чăрăш авăнĕ,
Кукук аватĕ
Илĕртсе манми чăтлăха.
Ӳкĕнессĕм çук,
Ӳкĕтлессĕм çук
Ĕнерхи хавас яшлăха.

Кăмăлна хытар,
Куççульна пытар,—
Кирлĕ мар йĕме, кирлĕ мар.
Шăнкрав курăкĕ
Парне пултăр-и,—
Ална пар, савни, уйрăлар.